• *Ас тăвăм*

# Анисим Асламас ячĕпе

**Чăваш АССР тата РФ искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, иртнĕ ĕмĕрте пурăннă А.В.Асламас композитор çуралнăранпа 85 çул çитрĕ. Анисим Васильевича асăнса çак кунсенче Етĕрне районĕнче тĕрлĕ мероприяти иртрĕ.**

Чи курăмлă пулăмсенчен пĕри – 1924-1942 çулсенче Вăрманкас Асламасра пурăннă çурт çине асăну хăми çакни. Çак ятпа митинга Мăн Чураш ял администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Г.Сафронов уçрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Е.М.Яранский, республика Композиторсен союзĕн правленийĕн председателĕ Н.Н.Казаков, Чăваш патшалăх академи капеллин илемлĕх ертÿçи тата тĕп дирижерĕ М.Н.Яклашкин, Анисим Васильевичăн мăшăрĕ М.В.Васильева-Асламас тата хĕрĕ, Шупашкарти музыка училищин преподавателĕ Т.А.Асламас сăмах каларĕç. Вырăнти артистсемпе академи капеллин коллективĕ ялти культура çуртĕнче паллă композиторăн тата унăн юлташĕсен Ф.М.Лукинăн, Г.Я.Хирбюпе Ф.С.Васильевăн хайлавĕсем тăрăх пысăк концерт кăтартрĕç.

Анисим Васильев /Асламас хушма хушамата вăл утмăл çул каялла Киеври консерваторире вĕреннĕ чухне илнĕ/ ашшĕнчен тата аслă пиччĕшĕсенчен тĕслĕх илсе купăс калама вĕреннĕ. Вăрманкас Асламасри тулли мар вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн вун виçĕ çулти Анисим Шупашкарти музыка училищине вĕренме килет. Хаяр вăрçă пуçлансан, училищĕне вăхăтлăха хупсан тăван ялне таврăнать, колхозра учетчикра ĕçлет.

Вун çичĕ çул тултарсан Анисим хăйне вăрçа яма ыйтать. Анчах çар комиссарĕ пĕвĕпе пысăках мар, имшертерех каччăна çĕнĕ çулччен ялтах ĕçлесе пурăнма сĕннĕ. 1942 çулхи авăн уйăхĕнче А.Васильев çар комиссарĕн направленийĕпе пехота училищине вĕренме кайнă. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç Брянскпа Орел хутлăхĕсенче çапăçма пуçланă. А.Васильев телефонист тата связист 1943-1945 çулсенче Беларуçа, Польшăна тата Хĕвел тухăç Пруссие ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă.

Шупашкарти музыка училищинче вĕреннĕ чухне Анисим ытларах баян тата пианино каланă, вĕрсе каламалли инструментсемпе кăсăкланнă. Хаяр вăрçă вĕçленесле чăваш каччине А.Горбатов генерал ертсе пынă 3-мĕш армин вĕрсе каламалли оркестрĕн музыканчĕ пулма çирĕплетнĕ.

Украинăри юлташĕсем сĕннипе А.Васильев сержант 1945 çулта Киеври консерваторие вĕренме кĕрет. Днепр çинчи чи шĕкĕр хулара юрăсем кăна мар, чуна пырса тивекен романссем, фортепьянăпа калама сонатăсемпе пьесăсем, симфони оркестрĕ валли "Чăваш фантазийĕ" произведени хайланă.

50-мĕш çулсенче Анисим Васильев-Асламас Мускаври П.И.Чайковский ячĕллĕ консерваторире пĕлÿ илнĕ, Н.А. Римский-Корсаков ячĕллĕ ятарлă стипендие тивĕçнĕ.

Анисим Васильевич тĕрлĕ çулта Шупашкарти музыка училищинче, Чăваш педагогика институтĕнче ĕçленĕ, Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче музыка пайне ертсе пынă.

Талантлă композитор иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче "Сăваплă юманлăх", "Таталнă вальс", "Çеçпĕл", "Вера Сарьялова", "Салампи", "Евчĕ" оперăсем, "Нарспипе Сетнер" балет, музыка камичĕсем, симфони оркестрĕ, фортепьяно, гобой, хĕлĕхлĕ тата вĕрсе каламалли инструментсем валли пысăк калăплă хайлавсем çырнă. Анисим Васильевичăн вилĕмсĕр кĕввисене халĕ Чăваш Енри оркестрсемпе хорсем тата уйрăм юрăçсем кăна мар, Раççейри нумай регионта, Германире, Польшăра, Францире, Украинăра, Японире, ытти çĕршывра пĕлеççĕ.

Çак кунсенче Етĕрнери искусство шкулне А.В.Асламас ятне панă.

■ **Петр СИДОРОВ**